**Хусанкай Днепр çыранне пуç таять:**

– Эс пултăн иккĕмĕш анне,
Ман тăвана чыспа пытартăн.
Эс унăн чĕрĕ суранне
Яланлăх ăшăнта хăвартăн.

Епле сана пуç таяс мар,
Юратупа епле хĕмленмĕн?
Атака сапрĕ вут-кăвар,
Çак çырана юнпа хĕретрĕм.

Кашниййĕн хăйĕн çĕрĕ пур.
Туссем пулсан – телейлĕ, тетпĕр.
Тăшман та пур, анчах та хур
Тăваймĕ вăл – çулран çĕтмест Çĕр.

Çĕр çаврăнсан, Хĕвел пăхсан,
Ĕмĕтленсе пурнатăн ыррăн.
Ĕмĕтленни çитсе пырсан,
Таçта та саншăн кил пек вырăн.

Тарас çĕрне хисеплесе
Таятăп пуç, савнатăп питĕ:
Пăхать, алшăллине сирсе,
Чăваш çĕршывĕн çутă пичĕ!

1969–71, Шупашкар–Киев.

А. Воробьев куçарнă.